26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус

1943
ДЕКАБРЬ
21
ЫТЛАРИКУН
251(6488) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ

ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнче

ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ А. Андреев юлташ, Оборонăн Государственный Комитечĕн 1943-мĕш çулхи декабрĕн 6-мĕшĕнче кăларнă постановленийĕ тăрăх, кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра тракторсене юсамалли плана вăхăтра пурнăçа кĕртнĕшĕн МТС-семпе МТМ-сене тата машинăсем юсакан заводсене премилесси çинчен приказ кăларнă. Çав приказ тăрăх:

1. Тракторсем юсас тата запаслă пайсем хатĕрлес ĕçре МТС-семпе МТМ-сен тата машинăсем юсакан заводсен уйрăмах паларнă руководителĕсемпе инженерла-техникла работникĕсене çакăн пек премисем параççĕ:

а) Машинăсем юсакан заводсемпе хозрасчетлă машинно-тракторнăй мастерскойсен директорĕсемпе главнăй инженерĕсене, МТС директорĕсемпе старши механикĕсене тата МТС çумĕнчи ремонтнăй мастерскойсен механик-заведующийĕсене çапла премилеççĕ:

тракторсемпе моторсене юсамалли уйăхри плана лайăх ĕçлесе пурнăçланăшăн икĕ уйăхри ĕçукçи чухлĕ преми параççĕ;

тракторсемпе моторсене кĕркуннепе хĕллехи тапхăрта юсамалли плана пĕтĕмпех вăхăтра тата лайăх ĕçлесе пурнăçланăшăн виçĕ уйăхри ĕçукçи чухлĕ преми параççĕ.

б) МТС-сен, машинăсем юсакан заводсен тата МТМ-сен цех начальникĕсене, мастерĕсене тата мастер-контролерĕсене çапла премилеççĕ:

тракторсемпе машинăсене юсамалли уйăхри плана лайăх ĕçлесе пурнăçланăшăн — пĕр уйăхри ĕç укçи чухлĕ преми параççĕ;

тракторсемпе моторсене кĕркуннепе хĕлле юсамалли плана лайăх ĕçлесе срокра пурнăçа кĕртнĕшĕн — икĕ уйăхри ĕç укçи чухлĕ преми параççĕ.

2. МТС-сен, машинăсем юсакан заводсен тата МТМ-сен директорĕсене, тракторсем юсамалли уйăхри плана тултарнăскерсене, ĕçре уйрăмах паларнă рабочисене пĕр уйăхри ĕç укçи чухлĕ преми параççĕ.

3. Ремонт тресчĕсен, республикăсенчи Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕсен, крайри (облаçри) çĕрĕç пайĕсен тата ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн ертсе пыракан тата инженерла-техникла работникĕсене тракторсене юсамалли уйăхри плана тултарнăшăн пĕр уйăхри ĕç укçи чухлĕ, тракторсене кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра юсамалли плана пĕтĕмпех тултарнăшăн икĕ уйăхри ĕç укçи чухлĕ преми параççĕ.

Машинăсем юсакан заводсен тата МТМ-сен директорĕсене тата главнăй инженерĕсене памалли премисене трест управляющийĕсен приказĕ тăрăх ĕç укçи фондĕнчен параççĕ.

МТС директорĕсемпе старши механиксене, МТС-сем çумĕнчи мастерскойсен механик-заведующийĕсене республикăсенчи Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн, крайри (облаçри) çĕрĕç пайĕн начальникĕн приказĕ тăрăх— ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ ятарласа уйăрнă укçаран тӳлемелле.

Цех начальникĕсене, мастерсене, машинăсем юсакан заводсенчи тата хозрасчетнăй мастерскойсенчи рабочисене премисене укçине ĕç укçи фондĕнчен тӳлемелле. МТС çумĕнчи мастерскойсен рабочийĕсене ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ ятарласа уйăрнă укçаран тӳлемелле.

4. МТС, МТМ тата машинăсем юсакан заводсен пур работникĕсене те çакна пĕлтереççĕ: Оборонăн Государственный Комитечĕ 1943-мĕш çулхи декабрĕн 6-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх, МТС-семпе совхозсен тракторĕсене юсамалли уйăхри плансене лайăх ĕçлесе пурнăçланăшăн республикăсемпе крайсене тата облаçсене пама Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавĕсене пилĕк ялав тунă. Çав ялазпа пĕрле 300.000 тенкĕ преми памалла.

5. Тракторсене юсамалли уйăхри плансене иртгерсе тултарассишĕн пыракан ăмăртура пĕрремĕш вырăн йышăннă МТС-сем, МТМ-сем тата машинăсем юсакан заводсем валли ВЦСПС-па ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавĕсене 35 ялав тунă. Çав ялавпа пĕрле 20.000 тенкĕ укçа памалла.

6. Тракторсемпе ялхуçалăх машинисен запаслă пайĕсене тăвакан тата киввисене юсакан предприятисене вĕсем хăш ведомствăна пăхăнса тăнине пăхмасăрах çакăн çинчен пĕлтереççĕ: Оборонăн Государственный Комитечĕн 1943-мĕш çулхи декабрĕн 6-мĕшĕнче кăларнă постановленийĕ тăрăх, запаслă пайсем тумалли плана тултарнăшăн тата иртгерсе тултарнăшăн премилеме тунă йĕрке халь тракторсемпе ялхуçалăх машинисен запаслă пайĕсене тăвакан тата юсакан мĕнпур предприятисене те тивет. Вăл йĕркепе çапла премилеççĕ:

тракторсемпе ялхуçалăх машинисем валли запаслă пайсем кăлармалли плана иртгерсе тултарнă предприятисене, хатĕрленĕ запаслă пайсен пахалăхне кура тата ăна тупма йывăррине шута илсе, ССР Союзĕн Наркомземĕ çав запаслă пайсен хакĕнчен 3 процентран пуçласа 10 процент таран преми парать, çав предприятисен директорĕсемпе главнăй инженерĕсене — вĕсен уйăх çу-рăри ĕç укçи чухлĕ преми параççĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Шоссе çулĕсем тунă çĕрте уйрăмах паларнă Шоссе çулĕсен Управленийĕн работникĕсене, партипе совет организацийĕсен руководителĕсене, колхозниксемпе колхозницăсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

Чăваш АССР-ĕнчи шоссе çулĕсене туса пĕтерес ĕçе срокчен вĕçленĕшĕн çак ĕçре уйрăмах паларнă Шоссе çулĕсен Управленийĕн работникĕсене, партипе совет организацийĕсен руководителĕсене, колхозниксемпе колхозницăсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăлас:

1. Метрена Петровна **Абыковăна** —Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Мочикасси ялĕнчи çулйĕр бригадин бригадирне.
2. Петр Александрович **Александрова** — Шăхасан районĕнчи «1-ое мая» колхоз председательне.
3. Кузьма Андреевич **Андреева**— Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Восток» колхозăн çулйĕр бригадин бригадирне.
4. Владимир Митрофанович **Архангельские** — çулйĕр мастерскойĕсен слесарь ĕçĕсене тăвакан цех мастерне.
5. Михаил Йванович **Архипова.**
6. Ефросиния Федотовна **Ашмарина** — Шупашкар районĕнчи Войков ячĕпе тăракан колхозăн колхозницине.
7. Матвей Семенович **Батракова** —строительствăн 4-мĕш номерлĕ районĕнчи платниксен бригадирне.
8. Иван Филарентович **Блохина**— Куславкка районĕнчи «Большевик» колхозăн колхозникне.
9. Александр Борисович **Борисова** —строительствăн 4-мĕш номерлĕ районĕнчи платнике.
10. Сергей Макарович **Ботярова** — 5-мĕш номерлĕ автоколоннăн шоферне.
11. Петр Васильевич **Будалова** — 6-мĕш номерлĕ автоколоннăн шоферне.
12. Аркадий Афанасьевич **Бузагина** — Калинино районĕнчи «Çутал-ла» колхозăн колхозникне.
13. Никандр Васильевич **Васильева** — Советски районри «Спутник колхозника» колхозăн колхозникне.
14. Антон Дмитриевич **Веселова** — Шупашкар районĕнчи Шĕмшер ялсоветĕнчи çулйĕр бригадин бригадирне.
15. Абрам Юдович **Винникова** — строительствăн 5-мĕш номерлĕ районĕнчи старши прораба.
16. Никита Михайлович **Волкова**— Канаш районĕнчи «Хĕрлĕ хĕм» колхоз бригадирне.
17. Степан Тимофеевич **Вяткина**— Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхозăн колхозникне.
18. Лев Борисович **Гезенцева** — строительствăн 7-мĕш номерлĕ районĕнчи главнăй инженера.
19. Лев Александрович **Гейнемана** —çулйĕр Управленийĕн кĕперсем тăвакан отдел начальникне.
20. Тихон Иванович **Герасимова** — çулйĕр мастерскойĕсен медникне.
21. Иван Григорьевич **Голованова** —красноармееца.
22. Михаил Александрович **Грибкова**—çулйĕр Управленийĕн производствăпа техника отделĕн старши инженерне.
23. Леонид Михайлович **Гусева** — строительствăн 7-мĕш номерлĕ районĕнчи тракториста.
24. Александр Степанович **Гущина** —лейтенанта.
25. Иван Михайлович **Дегтярева** —Етĕрне районĕнчи «Путь к социализму» колхозри çулйĕр бригадин бригадирне.
26. Мария Демьяновна **Демьяновăна** — Канаш районĕнчи Доронин ячĕпе тăракан колхозăн бригадирне.
27. Владимир Константинович **Дмитриевские** — строительствăн 4-мĕш номерлĕ районĕнчи шофера.
28. Прасковья Игнатьевна **Долговăна** — Етĕрне районĕнчи «Пионер» колхозăн колхозницине.
29. Михаил Иванович **Дударева** — çулйĕр мастерскойĕсен токарьне.
30. Илья Моисеевич **Друяна** — Етĕрне районĕнчи «Пионер» колхозăн колхозникне.
31. Николай Григорьевич **Дядека**— старши лейтенанта.

(Юлашки çитес номерте пулать)

Чăваш халăхĕн паттăр ывăлĕ Совет Союзĕн Геройĕ Филипп Ахаев

Чăваш халăхĕн хăюллă ывăлĕ Совет Союзĕн Геройĕ Филипп Петрович Ахаев Днепр леш енче Совет Украинин çĕрне нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен тасатассишĕн пыракан хаяр та юнлă кĕрешӳре паттăррăн çапăçать.

Хăюллă комсомолец Филипп Ахаев ертсе пыракан орудие фронтăн пĕр участокĕнчи çав тери ответлă вырăна, пĕр питех те кирлĕ пункт патне тухмалли çул тăсăлса выртакан çĕре, вăрман хĕррине засадăна лартнă. Çавăнтан инçех те мар, Ахаев комсорг пулса тăракан батарейăри ытти орудисем те вырнаçнă.

Нимĕç танкĕсем, вăрман уçланкине тухса, пирĕн батарейăна чăсри тĕп вăйсенчен уйăрнă. Питех те йывăр самант килсе тухнă. Гвардии старши сержанчĕ Ахаев çухалса кайман, вăл хăйĕн расчетĕнчи боецсене чĕнсе çакăн пек каланă:

— Юлташсем! Çакна астăвăр: гвардеецсем вилсен те тыткăна парăнмаççĕ. Анчах вилме хăравçă та пултарать. А вăт çапăçуран чĕррĕн, герой пулса тухасси — комсомолецсен чыслă ĕçĕ пулĕ...

Кĕçех нимĕçсен малтанхи 10 танкĕ батарейăн позицине хăрушшăн кĕрлесе килсе атакăланă. Батарея командирĕ гвардии старши лейтенанчĕ Чумаченко приказ панă:

— Пур орудисен те пеме чарăнмалла, хамăр ăçта вырнаçнине тата пирĕн миçе оруди пулнине нимĕçсене пĕлтермелле мар. Старши сержант Ахаев çапăçăва чи пирвай кĕрет. Ыттисем — кĕрешӳ хĕрсе пынă май çапăçăва кĕмелле.

Танксем çывхарсах пынă. Ахаев вĕсене çывăха çитиччен чăтăмлăн кĕтнĕ. Танксем 150—200 метра çывхарса çитсен, герой-комсомолецăн орудийĕ кĕрлеме тытăннă. Вăл питех те тĕл пенĕ. Вăрманта тупă сасси янраса тăнă. Йывăç турачĕсем силленнĕ, вĕсенчен юр тăкăннă. Нимĕçсен икĕ танкĕ огневой позицине çитиччен 75 метр юлсан çунса кайнă.

Нимĕçсем иккĕмĕш хут атакă тума тытăннă. Ку хутĕнче вĕсем çапăçăва 25 танк кĕртсе янă. Артиллеристсем, боеприпассене перекетлесе, питех те тĕл персе тăнă. Батарейăри артиллеристсем пурте Ахаев туппи нимĕçсен броньăланă машинисен кĕтĕвне хирĕç пĕр пĕччен питех те паттăррăн çапăçнине сывлама парăнсах сăнаса тăнă.

Паттăр гвардеец хăйĕн орудине лайăх маскировка тунă, нимĕçсем тем пек шырасан та ăна хыпашласа тупма, пĕтерсе тăкма пултарайман. Çапла вара, тăшман танкĕсем огневой позици патне çитме пултарайман.

Нимĕçсен танкĕсем виççĕмĕш хут атакăна кĕнĕ. Вĕсем ку хутĕнче каллех тепĕр йывăр танк çухатнă. Çухату тӳссе, тăшман танкĕсем вăхăтлăха чакнă. Çав вăхăтра усă курса, пирĕн артиллеристсем, хăйсен тупписене хăварса, ку вырăнтан шуса тухма пултарнă. Анчах ун пирки шухăш та пулма пултарайман.

Вĕсем хăйсем йышăннă рубежра талăкĕпех çапăçнă. Ахаевăн расчечĕ, ултă танк пĕтернĕскер, çак çапăçура уйрăмах çирĕп те чăтăмлă пулнă, пĕлсе çапăçнă.

Чăваш халăхĕн паттăр ывăлне Совет Союз Геройĕн ятне Киевран çурçĕртерехре Днепр шывĕ урлă ăнăçлăн каçса, Днепр шывĕн хĕвеланăç сыранĕнчи плацдарма çирĕплетнĕшĕн, çав çапăçусенче паттăрлăхпа геройлăх кăтартнăшăн СССР Верховный Совет Президиумĕ кăçалхи октябрĕн 17-мĕшĕнче йышăннă Указ тăрăх панă. Совет халăхĕн ытти темиçе пин паттăр ывăлĕсемпе пĕрле халĕ вăл совет çĕрне нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен пĕтĕмĕшпех тасатассишĕн çапăçать.

Малин хулинчен кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре çапăçусем кунĕн-çĕрĕн пыраççĕ. Нимĕçсем юлашки вăхăтра танксемпе, çĕрле те атакăсем тăваççĕ. Анчах вĕсем калама çук пысăк çухату тӳсеççĕ. Юрпа витĕннĕ уйхирте нимĕç танкĕсемпе туписен масарĕ купаланать. Пирĕн чаçсем нимĕçсен атакисене сирсе, контратакăсем тăваççĕ, тăшмана вăйлăн пырса çапса унăн чĕрĕ вăйĕпе техникине йышлăн пĕтерсе тăкаççĕ. Çав çапăçусенче тăван халăх ывăлĕ Совет Союзĕн Геройĕ Филипп Петрович Ахаев хăйĕн мухтавлă ятне татах та çӳлерех çĕклет.

Çĕнĕ çул умĕн

Тăрăшса ĕçленин паха результачĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Караньялĕнчи «Труд» артель коллективĕ, аслă çулпуç Сталин юлташ фронтпа çĕр-ĕçывшăн тăтах та тухăçлăрах ĕçлеме чĕнни çине ответлесе, ноябрьпе декабрь уйăхĕсенче нихçанхинчен лайăхрах ĕçлет.

Артель ноябрьти плана пĕтĕм продукци енĕпе 162,6 процент, куллен кирлĕ таварсем енĕпе 165,7 процент тултарнă, планран иртгерсе 92,7 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларнă. Çĕвĕ çĕлекен цех çулталăкри плана 228 процент пурнăçланă. Артельти паллă стахановецсем Д. Григорьев, И. Алексеев, В. Соловьева, В. Башкиров, Е. Осипова юлташсем ĕç нормине 250—300-шер процент тултарса пыраççĕ. Ĕç нормине тултарайман рабочисем артельте пачах та çук.

Артель ноябрь уйăхĕнче, социализмлă ăмăртура мала тухса, Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Халĕ артель коллективĕ çĕнĕ çулччен планран иртгерсе темиçе пин тенкĕлĕх продукци туса кăларассишĕн пĕтĕм вăйран тăрăшса ĕçлет.

П. ЛЕНАР.

Виçшер норма

КУСЛАВККА. Комбинат коллективĕ çĕнĕ çула ĕç тухăçлăхне вăйлăн ӳстерсе пынипе кĕтсе илет. Халĕ çак тĕллевпе рабочисемпе работницăсем социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пыраççĕ. Декабрĕн 10-мĕшĕнче комбинат çулталăкри плана ытлашшипех пурнăçларĕ. Ку уйăхра вăл планран иртгерсе темиçе пин тенкĕлĕх продукци туса кăларать. Калашников, Шукст юлташсем ертсе пыракан цехсем декабрь уйăхĕн планне те тултарнăпа пĕрех. Нурифламов, А. Павлов, Бешенов, Клочков стахановецсем юлашки кунсенче кулленех виçшер норма тултарса пычĕç. Ватă рабочисем Федоров, Смоловик юлташсем те çак кунсенче икĕ-виçĕ норма тултарма пуçларĕç Кашни цехрах поточнăй меслетпе ĕçлес ĕç ӳссе пырать. Пушкин юлташ ертсе пыракан цех йывăçсем типĕтмелли лайăх меслет шухăшласа кăларнă. Çак ĕçе тума халиччен 24 сехет кирлĕ пулнă пулсан, халĕ ăна 6 сехет хушшинчех тăваççĕ.

Комбинат ноябрь уйăхĕнче, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура мала тухса, виççĕмĕш преми илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Комбинат коллективĕ, преми илнĕ ятпа çитес çулта тата лайăхрах ĕçлеме пулса, хăй çине çĕнĕ обязательствăсем илчĕ. Халĕ кашни рабочи илнĕ обязательствăсене пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлет.

Н. ПЕТРУЧЕНКО,
Комбинатри партбюро секретарĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ДЕКАБРĔН 18-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Декабрĕн 18-мĕшĕнче КИРОВОГРАД енче пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, тăшмана унăн оборонри пулса тăракан темиçе пунктран хĕссе кăларнă. Тăшман темиçе хутчен контратака тума хăтланнă, анчах ăна, пысăк çухатусем тӳстерсе, каялла ывăтса янă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата артиллерипе минометсенчен персе тăнă.

Декабрĕн 17-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 33 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 66 самолетне персе ӳкернĕ.

ДЕКАБРĔН 19-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Çак кунсенче БАЛТИКА ÇУМĔНЧИ 1-мĕш фронтăн çарĕсем, арми генералĕ Баграмян ертсе пынипе, НЕВЕЛЬ хулинчен кăнтăртарахра вырнаçнă нимĕçсен фашистла çарĕсене хирĕç наступлени пуçласа янă, тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ оборона тăрăхне 80 километр сарлакĕш татса, шалалла 30 километр таран кĕрсе кайнă.

Çапăçусенче ГАЛИЦКИЙ генерал-лейтенантăн тата ШВЕЦОВ генерал-лейтенантăн çарĕсем, ОСЛИКОВСКИЙ генерал-лейтенантăн кавалерисчĕсем, танковăй войсăксен генерал-лейтенанчĕн БУТКОВĂН тата танковăй войскăсен генерал-майорĕн САХНОН танкисчĕсем тата авиаци генерал-лейтенанчĕн ПАПИВИНĂН летчикĕсем чапа тухнă.

Пилĕк кун хушши хĕрӳллĕн çапăçса, пирĕн çарсем халăх пурăнакан 500 пункта ытла ирĕке кăларнă, вĕсен хушшинче—Витебск облаçĕнчи ЕЗЕРИЩЕ ятлă район центрне, СЕЛИЩЕ, ВЫРОВЛЯ, ШАКУРОВО, КАРЕВЫ, ОБОЛЬ, ТЕЛЕШЕВО, ОСИПОВКА, ХАЛАМЕРЬЕ, ЛУТНЯ, МЕХОВОЕ, ЗЕЗЮЛИНО, БЕСЕНЯТА, ХВОШНО, БЕРЕЗНО, БУНАТИНО, ДУБРОВА, ВЫШЕДКИ, МЕДВЕДИ, МАХАЛОВО ятлă ялсене тата ЕЗЕРИЩЕ, ГРИБАЧИ, БЫЧИХА ятлă чугун çул станцийĕсене ирĕке кăларнă.

Çапăçусенче нимĕçсен 87-мĕш, 129-мĕш тата 211-мĕш пехотнăй дивизийĕсене, 20-мĕш танковăй дивизине тата хурал тăракан темиçе чаçне аркатса тăкнă. 69 танк, 164 тупă, 123 миномет, 586 пулемет, 760 автомашина тата 16 склад пĕтерсе тăкнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 20.000 салтакĕпе офицерне çити вилсе юлнă.

Пирĕн çарсем çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: 194 тупă, 75 миномет, 735 пулемет, 5.000 винтовкăпа автомат ытла, 37 танк, 110 автомашина, боеприпассем, хĕçпăшал, снаряжени тата апат-çимĕç хунă 24 склад, çар хатĕрĕсем тиенĕ 200 лав. Нимĕçсен 2.000 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата артиллерипе минометсенчен персе тăнă.

Декабрĕн 18-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 19 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 15 самолетне персе ӳкернĕ

☆ ☆ ☆

Баренц тинĕсĕнче тăшманăн 7.000 тонна таякан суднине путарнă.

* * *

Житомир облаçĕнче кĕрешекен партизансен темиçе отрячĕ, минăсем лартса, пĕр кун хушшинче нимĕçсен 5 çар эшелонне тата пĕр кĕпере сирпĕнтерсе янă, чугун çулăн 2 километр тăршшĕ участокне пăснă. Крушенисене пула нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерĕ ытла вилнĕ. Чугун çулăн çав участокĕ тăрăх поездсем çӳрессине вара 60 сехете чарса лартнă. Нимĕçсен пысăк карательнăй отрячĕсемпе çапăçса, партизансем 200 гитлеровеца çити вĕлернĕ, 11 пулемет, 120 автоматпа винтовка, боеприпассем нумай тата çар пурлăхĕ тиенĕ обоз тытса илнĕ.

* * *

Черкассы хули районĕнче нимĕçсен 72-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи салтаксемпе офицерсен чылай пысăк ушкăнне тыткăна илнĕ. Санитари ротинчен тыткăна лекнĕ врач Гейнц Рейман çапла каласа панă: «Эпĕ хирти госпитальре ĕçлерĕм. Кашни кун пирĕн пата дивизи подразделенийĕсенчен тата эсэсовецсен чаçĕсенчен аманнă салтаксем вĕçĕ-хĕррисĕр килсе тăратчĕç. Аманнисем çав тери нумай пырса тулнипе эпир вĕсене пулăшма ĕлкĕреймерĕмĕр».

Нимĕçсен 72-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи пĕр батальонăн командирĕ, Хĕрлĕ Çар енне куçнăскер, çапла каласа панă: «Манăн батальона çапăçăва кĕртсе янă кун ытла та хаяр çапăçусем пулчĕç. Эпир питĕ пысăк çухатусем тӳсрĕмĕр. Каç пулнă тĕле манăн 50—60 салтак çеç тăрса юлчĕ. Икĕ кун иртсен, ман батальона 120 çын хушса пачĕç. Вара вăл оборонăн çĕнĕ рубежне йышăнчĕ. Полк командирĕ мана çав рубежа кирек мĕн пулсан та алăра тытса тăма, уншăн пĕр салтак юлмичченех çапăçма хушрĕ. Вырăссем пире минометсемпе калама çук вăйлăн пеме тытăнчĕç. Эпир хамăр позицисене тытса тăраймарăмăр. Чĕрĕ юлнă 6 салтакпа пĕрле эпĕ вара тыткăна парăнтăм».

Саперсен батальонĕнчен тыткăна лекнĕ унтер-офицерсем Генриг Райншпа Август Кобуш тата обер-ефрейтор Адам Бургер çапла каласа панă: «Саперсен роти пехота подразделенийĕсем пек çапăçрĕ. Пире хытă ăшаларĕç. Пĕрремĕш ротăра 8 çын, виççĕмĕш ротăра 20 çын тăрса юлчĕ. Унтан обозри тата стройра тăман ытти подразделенисенчи салтаксенчен хутăш рота туса хучĕç. Анчах вырăс танкĕсем курăнсанах, çав салтаксем пурте тарса саланчĕç. Батальон командирĕ Штеффе майор мотоцикл çине ларчĕ те вĕçтерчĕ. Эпир сухалана хир тăрăх чупрăмăр, унтан выртрăмăр та пĕр пысăк ушкăнпа пĕрле тыткăна парăнтăмăр».

* * *

Аяларах нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Запорожье облаçĕнчи Михайловка ялĕнче тунă тискер ĕçсем çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Пирĕн яла оккупациленĕренпе гитлерла ирсĕрсем пирĕн ялти мирлĕ çынсене 1000 çынна ытла асаплантарса, персе вĕлерчĕç. Совет гражданĕсене Михайловка çывăхĕнчи вăрманта вĕлеретчĕç. Гитлерла пуçкасакансем колхозникe, Н. Базутăна, совет служащине Николай Тараненкăна, учителе Иван Добженкăна, колхоз председательне В. Смолана, колхозницăна Христина Филичникăна тата ытти нумай çынсене вĕлерчĕç. Пирĕн ялта нимĕçсем тыткăна лекнĕ аманнă кĕçĕн лейтенанта Конева асаплантарса вĕлерчĕç. Гестаповецсем ăна питĕ тискеррĕн асаплантарчĕç. Коневран тĕпчесе ыйтнă чухне ăна хĕнерĕç, хĕртнĕ çатма çине тăратрĕç, чĕрне хушшине йĕп чиксе кĕртрĕç. Совет офицерĕ мĕнпур асапсене чăтрĕ, герой вилĕмĕпе вилчĕ. Пуçкасакансем унтан хăйсене кирлĕ хыпарсене илеймерĕç. Михайловка ялĕнчи тата Михайловка районĕнчи 4.000 çынна яхăн нимĕçсем Германие каторгăлла ĕçе хăваласа кайрĕç. Хĕрлĕ Çар пыра-пыра çапнипе нимĕç вăрă-хурахĕсем колхозниксен 168 пӳртне, поликлиникăна, аптекăна тата пионер çуртне çунтарса ячĕç, армана сирпĕнтерчĕç, шкулсене, магазинсене тата мĕнпур обществăллă çуртсене ишрĕç».

Акт çине Михайловка ялĕнчи çак çынсем алă пуснă: С. Любомирский, Н. Попов, А. Семикин, И. Мирошник, И. Попова.

И. В. Сталин юлташ Эд. Бенеш господинпа калаçни

Декабрĕн 18-мĕшĕнче СССР Совнаркомĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ Чехословаки Республикин Президентне Эд. Бенеш господина йышăннă.

Калаçу вăхăтĕнче Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ тата Чехословаки Республикин ССР Союзĕнчи Посолĕ Зд. Фирлингер господин пулнă.

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем Харьков хулипе Харьков облаçĕн территорийĕ çинче вĕсене вăхăтлăха оккупациленĕ тапхăрта тунă тискер ĕçсем пирки пыракан

СУД ПРОЦЕСĔ

Декабрĕн 16-мĕшĕнчи каçхи лару

Суд свидетельсенчен ыйтса тĕпчеме пуçлать.

Малтан вăл Мелитополь хулинчи округ комиссарĕ пулнă оберштурмбаннфюрер Хейнишран ыйтса тĕпчет. Хейниш оккупациленĕ облаçăн хуçалăхне „ертсе пынă“, Германи çарĕпе тылĕ валли халăхран продуктсем турта-турта илнĕ. Продуктсем паманнисене арестленĕ тата персе пăрахнă. Çапла майпа Мелитополь округĕнче пĕр çулталăк хушшинче кăна 4.000 çынна çити пĕтернĕ. Прокурор Мелитополь хулинче тата унăн таврашĕнче нимĕç оккупанчĕсем вĕлернĕ совет гражданĕсен 14.000 виллине тупни çинчен калакан справкăна вуласа парать. Хейниш çав хисепе Германи çарĕн малта пыракан чаçĕсем оккупациленĕ хыççăн малтанхи уйăхсенче вĕлернĕ 10.000 совет çыннин виллисем те кĕрессĕ тесе каласа парать.

Совет çыннисене пере-пере пăрахса тата „газлă автомобильсенче“ пăчăхтарса вĕлернĕ. Хейниш 1942-мĕш çулхи декабрь уйăхĕнче кăна Мелитополь хулинче арестленĕ 1.200 совет гражданĕн кунçулĕ çинчен каласа, çакна пĕлтерет:

— Вĕсене Симферопольти лагере янă, унта вара вĕсене персе пăрахнă е „газлă автомобильсенче“ пăчăхтарса вĕлернĕ.

Малалла Хейниш „душегубка“ текен машинăсем çинчен „Таври облаçĕнчи“ 5 округăн комиссарĕсен хупă канашлăвĕнче питех те нумай калаçни çинчен пĕлтерет. Çав канашлура Крымпа Тавриири СД тата гестапо начальникĕ полици генерал-лейтенанчĕ Альвенслебен тухса каланă. Вăл хăйĕн сăмахĕнче „газлă автомобильсем“ çинчен ытлашши нумай калаçнишĕн кăмăлсăр пулнă.

— Полици генерал-лейтенанчĕ фон-Альвенслебен пĕлтернĕ тăрăх,— каласа парать Хейниш,—фюрер, урăхла каласан, Гитлер, „газлă автомобильсем“ çинчен калаçма чарăнма хушнă.

Хейниш „душегубка“ текен машинăсемпе массăллăн усă курас ыйтăва 1942-мĕш çулта кĕркунне Гитлер патĕнче пулса иртнĕ канашлура татса пани çинчен, вăл канашлура Гиммлер та пулни çинчен каласа парать. Унта çакăн пек шухăшсене илсе кăтартрĕç: вырăс халăхне пăхăнтарса тăма йывăр, çавăнпа та ăна пĕр хĕрхенмесĕр хаярран тыткаламалла. Çавăн пек майсемпе кăна Российăна колони туса хума тата çав çĕршыври халăхсене пĕтерсе, вырăс халăхĕн вăйне чакарма пулать. Украинăри округсен комиссарĕсен канашлăвĕнче те (вăл канашлăва импери комиссарĕ Кох ертсе пычĕ) çавăн çинчен калаçрĕç. Кох ялсене çунтарни пысăк усă памании çинчен каларĕ. Халăха массăллăн пĕтерсе пырас политикăна татăклăн тата пĕр хĕрхенмесĕр пурнăçа кĕртсе пымалла, „мĕнпур кирлĕ мар элементсене“ пĕтермелле. Малалла Хейниш „газлă автомобильсемпе“ Германири концентрациллĕ лагерьсенче те усă курни çинчен пĕлтерчĕ.

Малалла Германин 78-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи рота инженерĕнчен свидетель Кошран тĕпчесе ыйтаççĕ. Вăл та нимĕçсем совет çыннисене „душегубка“ текен машинăсенче пăчăхтарса вĕлерес майпа анлăн усă курни çинчен калать.

— Гитлер тата унăн шайкки, тесе калать Кош,—совет халăхне пĕтерсе пырас политикăна пурнăçа кĕртсе пыраççĕ, ачасемпе хĕрарăмсене массăллăн вĕлерсе пĕтересси умĕнче те чарăнса тăмаççĕ.

— Гитлерпа унăн шайкки,—тет свидетель,—Германие намăслантарма шутласа кăларнă çав „газлă автомобиле“ хăйсем лексен питĕ тĕрĕс пулнă пулĕччĕ.

Гитлеровецсен лагерĕсенче мĕн туни çинчен судра Германи çарĕн фельдфебелĕ свидетель Янчи каласа пачĕ. Вязьмăри 231-мĕш лагерьте тыткăна лекнĕ çар çыннисемпе пĕрле мирлĕ граждансене те тытса усрана. Пĕррехинче Германи командованийĕ çав лагерьтен 15.000 çынна Смоленска куçарма хушнă. Çĕнĕ вырăна 2.000 çын çеç çитнĕ, ытти 13.000 çын çул çинче вилнĕ. Çынсене çавăн пек массăллăн вĕлерме малтанах шутласа хунă пулнă. Вязьмăра арестленисем 10.000 çын юлнă, вĕсене унта выçăпа асаплантарнă, хĕненĕ, персе вĕлернĕ.

— Çавăн пек тискерлĕхсем çинчен высши командовани пĕлнĕ-и?— ыйтать прокурор.

— Высши командовани,—ответлет Янчи,—лагерьсенчи йĕркесем çинчен пĕлнĕ кăна мар, вăл çав йĕркесене хăй организацилевĕ.

Декабрĕн 16-мĕшĕнчи каçхи ларура юлашкинчен Харьковри „СД зондеркомандин“ шоферĕнчен Бойко свидетельтен ыйтса тĕпченĕ. Вăл нимĕç оккупанчĕсен преступленийĕсене пĕтĕмпех çирĕплетсе панă.

нисене массăллăн персе пăрахма тытăнчĕç. Çавăн пек тискерлĕх тăватă кун хушши пычĕ.

Дженчиладзе каланисем çумне хушса, госпиталь начальникĕн ĕçĕсене туса пынă профессор каласа парать. Вăл çавăн пек тискер преступление тума гитлеровецсем малтанах шутласа хунине, хатĕрленнине тата ăна организациленине кăтартса парать. Нимĕç ирсĕрĕсем çавăн пек тискерлĕхсемпе çырлахмасăр, пĕр йывăр чирленĕ çынна госпиталь килкартишне илсе тухрĕç те стена çумне пăталаса хучĕç. Ун тавра нимĕçсем пухăнса тăчĕç Вĕсем савăнăçлăн ахăлтатса кулчĕç, чылайĕшĕсем стена çумне пăталанă çынна фото-аппаратпа ӳкерсе илчĕç.

Малалла 1-мĕш сортировочнăй госпитальте медицина сестри пулса ĕçленĕ свидетельтен Сокольскаяран тата Козлова свидетельтен ыйтса тĕпчеççĕ. (Козловăн упăшкине нимĕçсем аманнисене асаплантарса вĕлернĕ чухне персе вĕлернĕ).

Свидетель Беспалов суда оккупантсем Сокольники паркĕнче тунă тискер ĕçсем çинчен каласа парать.

Свидетельсем Сериков, Подкопай, Гайдамак, Головко тата Осмачко хăйсен сăмахĕсенче нимĕçсен фашистла захватчикĕсем ним айăпсăр совет çыннисене персе пăрахни çинчен калакан çĕнĕ фактсене илсе кăтартаççĕ.

Суд председателĕ — юстици генерал - майорĕ Мясников свидетельсене ыйтса тĕпчесси пĕтни çинчен пĕлтерет.

Унтан суд судпа медицина экспертизин заключенине итлет.

* * *

Декабрĕн 18-мĕшĕнчи ирхи ларура пренисем пуçланнă. Çар прокурорĕ—юстици полковникĕ Н. К. Дунаев юлташ айăпласа сăмах каланă хыççăн, суд председателĕ—юстици генерал-майорĕ А. Н. Мясников юлташ защитниксене—Коммодов, Казначеев тата Белов адвокатсене сăмах парать.

Айăпланакансем хăйсен юлашки сăмахĕсене каланă хыççăн суд канашлама каять.

Çар Трибуналĕн ПРИГОВОРĔ

Декабрĕн 18-мĕшĕнче, 23 сехетте 40 минутра, суд председателĕ юстици генерал-майорĕ А. Н. Мясников юлташ Украинăри 4-мĕш фронтăн Çар Трибуналĕ нимĕçсен фашистла захватчикĕсем Харьков хулипе Харьков облаçĕнче вĕсене вăхăтлăха оккупациленĕ тапхăрта тунă тискер ĕçсем пирки айăпласа çырнă приговора вуласа парать.

Çар Трибуналĕ айăпланакансем пурте ССР Союзĕн Верховнăй Совет Президиумĕ 1943-мĕш çулхи апрелĕн 19-мĕшĕнче кăларнă Указăн 1-мĕш пайĕнче кăтартнă преступленисемшĕн пĕтĕмпех айăплă тесе палăртрĕ тата çакăн пек приговор йышăнчĕ:

Айăпланакансене Лангхельд Вильгельма, Риц Ганса, Рецлав Рейнгарда тата Михаил Петрович Буланова—çакса вĕлермелле.

Суд залне пухăннă Харьков хулинчи йышлă ĕççыннисем приговора пысăк тимлĕхпе итленĕ тата пĕр шухăш-кăмăлпа ырланă.

ХАРЬКОВ хули, 1943-мĕш çулхи декабрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС).

Декабрĕн 17-мĕшĕнчи ирхи тата каçхи ларусем

Çар трибуналĕ умне свидетельсен пĕр ушкăнĕ — 69-мĕш çарăн 1-мĕш госпиталĕнчи работниксем пыра-пыра тăраççĕ. Нимĕçсем Харьков хулине илнĕ хыççăн 1943-мĕш çулхи март уйăхĕнче, çав госпитальре питех те тискер ĕç пулса иртнĕ. Акă мĕн каласа парать судра свидетель хирург Дженчиладзе:

— Госпиталĕн 8-мĕш корпусне йывăр аманнисене, çийĕнчех оперативнăй пулăшу памаллисене тата операци тумалли пӳлĕмрисене илсе пычĕç. Взрыв пулчĕ. Мана хирĕç санитаркăсем кăшкăрса чупса пыраççĕ. Çавăн пек пулнă иккен унта: госпиталь патне эсэсовецсем пынă та, алăксене çапса лартса, çурта вут тивертекен икĕ бомба пăрахнă. Пĕрремĕш хута часах çулăм хыпса илчĕ. Çулăм аманнисем выртакан кравачсем патне куçрĕ. Аманнисем вара çунакан тумтирĕсемпе чӳречесем патне шума тытăнчĕç. Нумайĕшĕсем питех те начарланса çитнĕччĕ. Вĕсем темиçе ярса пуссанах çĕре ӳксе вилчĕç. Чӳречесем витĕр тухма хăтлана кансене эсэсовецсем автоматсемпе пере-пере пăрахрĕç. Çунакан çынсем палатăсем тăрăх чупса çӳрерĕç, анчах ниçта та хӳтлĕх тупаймарĕç: çуртра çулăм ялкăшать, чӳречесем патĕнче пульăсем шăхăраççĕ. Иккĕмĕш хутра та çавăн пекех пулса иртрĕ. Госпитальри ытти корпуссенче выртакансемшĕн те çавăн пек тискер кунçул килсе тухрĕ. Госпитале татах эсэсовецсен отрячĕ килчĕ. Вĕсем аман-

Вăрман хатĕрлевĕ

Иккĕмĕш çурçулти плана пурнăçларĕ

ШАХАСАН, декабрĕн 18-мĕшĕ. (Телефонпа). Район иккĕмĕш çур çулта вăрман хатĕрлемелли плана декабрĕн 17-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмĕшпех пурнăçларĕ. «Свет» колхоз (председателĕ Герасимов юлташ) иккĕмĕш çур çулта вутă хатĕрлесе турттармалли плана 165 процента çити пурнăçларĕ. Çавăн пекех «Красный трактор», «Оборона» колхозсем те иккĕмĕш çур çулхи вăрман хатĕрлевĕн планне 135 процент таран тултарнă. «Красноармеец» колхозран пынă Егоровпа Лукин юлташсем кунне 2,5 кубометр вутă хатĕрлес вырăнне тăтăшах 5—6 кубометр хатĕрлеççĕ. Калинин ячĕпе тăракан колхозри Михайлов юлташ вăрман каснă çĕрте ĕç нормине кулленех 200 процент тултарать.

Вăрманта ĕçлекенсем хушшинче агитациллĕ-ăнлантарулла ĕçе аван йĕркелени ĕç тухăçлăхне ӳстерме нумай пулăшрĕ.

Ку ĕçе ВКП(б) райкомĕн инструкторĕсемпе пропагандисчĕсем йĕркеллĕн туса пычĕç.

Халĕ район 1944-мĕш çулхи вăрман хатĕрлевĕн заданине пурнăçлама тытăнчĕ.

Н. МАТВЕЕВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

ПЛАНА ЫТЛАШШИПЕХ ТУЛТАРАÇÇĔ

КАНАШ, декабрĕн 19-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри малта пыракан «Идея Ленина», «Канаш», Чкалов ячĕпе тăракан колхозсем иккĕмĕш çур çулти вăрман хатĕрлевĕн планне срокченех пурнăçларĕç. Йĕпреç леспромхозĕнче ĕçлекенсем тăваттăмĕш кварталта чугун çул валли 500 кубометр вутă турттарас вырăнне 750 кубометр турттарчĕç.

Кунта ĕçлекен колхозниксемпе колхозницăсем, виçĕ аслă держава руководителĕсен конференцийĕн историллĕ решенийĕсене сӳтсе-явнă хыççăн, ĕç нормине куллен 150—200 процент тултарса пыма обязательство илчĕç. «Хавас» колхозри А. Тихонова, М. Соловьева юлташсем халĕ кашни кунах задание 150 процент тултарса пыраççĕ. «Динамо» колхозран янă Т. Бортасов юлташ ĕç нормине икĕ хут иртттерсе тултарать.

Иккĕмĕш çур çулта чугун çул валли вутă турттармалли плана район декабрĕн 16-мĕшĕ тĕлне 105 процент таран пурнăçларĕ. Çавăн пекех вутă хатĕрлемелли плана та январĕн 1-мĕшĕ тĕлне ытлашшипех пурнăçлать.

А. ДОЛГОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Вăрман хатĕрлес ĕç сӳрĕк пырать-ха

ÇЕМЕРЛЕ. Юлашки кунсенче вăрман хатĕрлес ĕç, ноябрь уйăхĕнчипе танлаштарсан, лайăхланни курăнать. План тăрăх вăрманта çуран 123 çын, лашапа 110 çын ĕçлемелле пулсан, хальхи вăхăтра вăрман хатĕрлевĕнче çуран 126 çын, лашапа 148 çын ĕçлет. Анчах та район декабрĕн 15-мĕшĕ тĕлне уйăхлăх вăхăтĕнче вутă хатĕрлемелли плана 50 процент çеç тултарнă. «Искра», «Лесной огонек» тата Буденный ячĕпе тăракан колхозсем вутă хатĕрлес ĕçе пуçăнман та.

ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕ вăрман хатĕрлес ĕçе оперативно ертсе пыманни курăнать. Вĕсем хăйсем енчен вăрмана уполномоченнăйсем яман. Вăрманта ĕçлекенсем хушшинче агитациллĕ-ăнлантарулла ĕç сӳрĕк пырать. Хăшпĕр ĕçлекенсем кулленхи задание тултарса пымаççĕ. Çаксене пула район ку ĕçре юлса пырать. ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕн çак ĕçе кирлĕ пек ертсе пымалла.

Красноармейски районра вăрлăх хатĕрлемеççĕ

Кунти чылай колхозсенче вăрлăх фончĕсене халĕ те хывса çитермен. «Сила» колхозăн çĕрĕ те аван, тырри те кăçал начар мар пулнă. Анчах вăрлăхсене çителĕклĕ хывса хăварман. Пăрça, пăри, вăрлăхĕсем çитмеççĕ.

Итмар ялсоветĕнчи колхозсенче иртнĕ çулта вăрлăх çителĕклĕ хывманччĕ. Çавăн пирки çуракин малтанхи кунĕсенче пысăк чăрмавсем пулчĕç. Колхоз руководителĕсем çакăнтан кăçал каллех вывод туман.

Вăрлăх фондне туса çитерессишĕн кашни колхозăн çине тăрса ĕçлемелле. Çакна «14 лет Октября» колхоз руководителĕсем шута илмен. Çитес çул акма унта 18 центнер вика, 6 центнер ясмăк, 19 центнер пăрça вăрлăхĕсем çитмеççĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ хĕллехи агротехникăллă ĕçсен планне пурнăçа кĕртесси çинчен йышăннă постановленире вăрлăх фончĕсене хывса çитересси тата сортлассии çинчен лайăх кăтартусем панă. Çак постановление пурнăçа кĕртмелĕх вăхăт пулчĕ. Анчах «Чувашия» колхозра çĕрулми вăрлăхĕ 64 центнер, пăрça вăрлăхĕ 16 центнер, вика вăрлăхĕ 14 центнер çитмест. Карай ялсоветĕнчи «Большевик» колхоз председателĕ Сидоров юлташ вăрлăх мĕн чухлĕ çитменнине шута та илмен, кунта 198 центнер çĕрулми вăрлăхĕ, 71 центнер ясмăк вăрлăхĕ кирлĕ. Апла пулсан та çак вăрлăхсене халех тупса çитерес пирки шутламаççĕ те.

Районри чылай колхозсен клевер вăрлăхĕ çук. Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ С. Андреев юлташ вăрлăхсене колхозсем хушшинче улăштарас ĕçе хăçан пуçăнма шутлать-ши? Вăл районĕпе мĕн чухлĕ вăрлăх çитменнине те, хăш колхозсем вăрлăх фончĕсене хывса çитернине те лайăххăн пĕлмест. Райçĕрĕç пайĕн агрономĕсем вăхăта ытларах кабинетсенче ларса ирттереççĕ.

С. ШАДИН.
(«Чăваш Коммуни» корр.).

Тупăшсене тĕрĕс валеçер

Кăçал колхозниксемпе колхозницăсем тухăçлă тырпул туса илчĕç. Халĕ ĕнтĕ республикăри колхозсем тупăшсене валеçме пуçăнаççĕ. Сахал мар колхозсенче ĕçкунĕ пуçне 3—4-шар килограмм е ытларах та тырă валеçсе параççĕ.

Çапла, Çĕмĕрле районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра кашни ĕçкунне пĕрчĕллĕ тырăсем кăна 4 килограмм валеçме палăртнă. Красноармейски районри «Комбайн» колхозра 3-шер килограмм, Советски районри «Заря» колхозра 2,5-шар килограмм валеçеççĕ. Кун пек тĕслĕхсене татах нумай илсе кăтартма пулать.

Тупăшсене валеçесси—ответлă та пысăк ĕç. Ăна тĕрĕс, колхозниксемпе государствăн интересĕсене лайăх шута илсе, туса ирттермелле.

Пуриншĕн те малтан, государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçа кĕртесси—колхозсен пирвайхи тивĕçлĕхĕ пулса тăрать. Ялхуçалăх артелĕн уставĕ тăрăх, колхозсем тупăшсене государство умĕнчи обязательствăсене тултарнă хыççăн валеçеççĕ. Тупăшсене валеçме тытăниччен государствăна тырпул памалли плана, МТС-сене натуроплата тӳлемелли плана тултармалла.

Республикăри колхозсем, пĕтĕмĕшпе илсен, хăйсен государство умĕнчи обязательствисене пурнăçа кĕртнĕ ĕнтĕ. Государствăна тырпул памалли плана тултарнă хыççăн вĕсем, фронтпа çĕршыва ытларах пулăшас тесе, хуçалăхра перекетленĕ тырра государствăна сутма тытăнчĕç. Темиçе район государствăна тырă сутмалли плана тултарнă та ĕнтĕ.

Союзлă виçĕ державăн руководителĕсен Тегеранри конференцийĕ йышăннă декларацисемпе паллашнă хыççăн халь чылай колхозсемпе колхозниксем государствăна малтан сутни çумне хушса тырă сутма пуçларĕç.

Тупăшсене валеçнĕ чухне колхоз хăйĕн хуçалăхĕн ыйтăвĕсене тивĕçтересси çине тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Обществăллă фондсем тумалла. Вăл фондсемсĕр пĕр колхоз та пурăнма пултараймасть. Ялхуçалăх артелĕн уставĕ тăрăх, колхозсен государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçа кĕртнĕ хыççăн вăрлăхпа фураж фончĕсем, çавăн пекех валеçĕнмен фонд тумалла. Унсăр пуçне, çав фондсенчи тырпула çĕнĕ тырăпа улăштарса хумалла. Колхоз членĕсен пухăвĕ йышăннă тăрăх, колхозсем вăрçă инвалидĕсене, колхозри ĕçлеме пултарайман ватă çынсене, красноармеецсен çемьисене пулăшмалли, яслисем уçмалли фондсем тума пултараççĕ. Вăл фондсем пĕтĕм продукци хисепĕн икĕ процентĕнчен кая пулмалла мар. Çак çулте асăннă фондсене тунă хыççăн çеç колхозсенче тупăшсене валеçме тытăнма юрать.

Колхозсем ĕçкунĕсем çине тырпул валеçнисĕр пуçне укçа-тенкĕ валеçеççĕ. Укçа-тенкĕ валеçес ĕçе те тырпул валеçмелли йĕркепех тумалла. Малтанах государство умĕнчи парăмсене тӳлесе татмалла, обществăллă хуçалăх ыйтăвĕсене тивĕçтерме кирлĕ чухлĕ укçа-тенкĕ уйăрса хумалла. Колхозниксем хушшинче культурăллă-массăллă ĕçе организацилеме тата кадрсем хатĕрлеме укçа-тенкĕ çителĕклĕ уйăрса хумалла.

Колхозсен валеçĕнмен фонд тăвасси çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ 1938 çулхи декабрĕн 4-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх, валеçĕнмен фондсене укçа тупăшĕн хисепĕнчен 12—15 процентне хывмалла. Анчах та çак ĕçе пур çĕрте те тивĕçлипе пурнăçа кĕртсе пымаççĕ-ха. Валеçĕнмен фонда укçа-тенкĕ вăхăтра хывмаççĕ. Хăшпĕр колхозсенче çав фондсене салатса янисем те пулнă. Кун пек йĕркесĕрлĕхсене пĕтĕмпех пĕтермелле. Валеçĕнмен фондсем колхозсен обществăллă хуçалăхне ӳстермелли хăватлă вăй пулса тăнине яланах асра тытас пулать.

Тупăшсене валеçнĕ чухне ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх йышне ӳстермелли плана ирттерсе тултарнăшăн колхозниксене хушса тӳлемелли йĕркене пăхăнмалла. ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ хушса тӳлемелли çинчен йышăннă постановление çирĕппĕн пурнăçа кĕртмелле.

Тупăшсене валеçнĕ чухне колхозсенче ĕçленĕ трактористсене пама тырă уйăрса хăвармалла. Трактористсене колхозниксене ĕçкунĕ çине тивнĕ чухлĕ, анчах та 3 килограмран кая мар, тырă валеçсе памалла. Ку хисепе трактористсем ĕçленĕ вăхăтра илнĕ тырпул та кĕрет. Уйхир ĕçĕсене тума тара тытнă çынсене те тупăшсене валеçнĕ вăхăтра тӳлемелле. Вĕсене колхоз тырăпа е укçапа тӳлеме пултарать. Колхоз правленийĕсен Хĕрлĕ Çар боецĕсен çемьисене, çавăн пекех тата нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсене куçса каякансене ĕçшĕн чи малтан тӳлес пулать.

Тупăшсене валеçес умĕн колхозри учет мĕнле пулса пынине тĕпчесе тухни кирлĕ. Ĕçкунĕсене пĕтĕмĕшпех шута илсе, ĕç кĕнекисем çине çырмалла. Ку тĕлĕшпе Тăвай, Шăмăршă, Калинино тата ытти чылай районсенчи хăшпĕр колхозсенче ӳрĕк-сӳрĕк ĕçлеççĕ-ха. Партипе совет организацийĕсен тата çĕрĕç работникĕсен колхозсенче учет ĕçне лайăхлатма пулăшмалла. Колхоз счетовочĕ тунă колхозниксен çулталăкри ĕç итогĕсене бригадирсен тĕрĕслесе тухмалла, колхоз председателĕн çирĕплетмелле. Çакăн хыççăн вара кашни колхозник миçе ĕçкунĕ тунине курăнмалли вырăна çырса çапмалла. Çакăн пек туни колхозниксене ĕçкунĕсене тĕрĕс çырнине тĕрĕслеме май парать.

Тупăшсене валеçесси—çĕрĕç работникĕсемпе колхоз председателĕсен тата ялти общественноçăн паянхи питех те пысăк задачи. Партипе совет организацийĕсен вăл ĕçе большевикла ертсе пымалла.

I. КОСМИНСКИЙ

Художествăллă пултарулăх смотрне хатĕрленетпер

Çак çулхи октябрĕн 25-мĕшĕпе 1944 çулхи февралĕн 1-мĕшĕ хушшинче ялсенче тата район центрĕсенче художествăллă пултарулăхăн смотрне ирттереççĕ. Смотра ирттерме эпир ĕççынни депутачĕсен район совечĕ çумĕнче тата ялсовечĕсем çумĕнче ятарласа комиссисем организацилерĕмĕр.

Çак питех те кирлĕ мероприятие ирттернĕ çĕре комсомол организацийĕсем активлăн хутшăнчĕç. Вĕсем вулав çурчĕсен заведующийĕсемпе тата учительсемпе пĕрле çыхăнса ĕçлеççĕ.

Шупуç ялсоветĕнчи вулав çурчĕн заведующийĕ комсомолка Борисова смотра хатĕрленес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлет. Вăл пуçарнипе вулав çурчĕ çумĕнче драмкружок тата шумовой оркестр организациленĕ. Шумовой оркестра 30 хут купăс хутшăнать. Ăна Васильев юлташ ертсе пырать. Борисова юлташ ертсе пынипе драмкружок «Патриотсем» ятлă спектакль хатĕрлет.

Алманч ялсовечĕ çумĕнчи вулав çуртĕнче, смотра хатĕрленнĕ май, çĕнĕрен драмкружок организациленĕ. Ăна М. Васильев комсомолец ертсе пырать.

Н. СКВОРЦОВ,
ВЛКСМ Красноармейски райкомĕн секретарĕ.

ТАСС опровержениĕ

Çак кунсенче Англири хăшпĕр хаçатсем Нью-Йоркран илнĕ çак пĕлтерĕве пичетлесе кăларнă: Македонипе Хĕвеланăç Фракие Болгари аллинчех хăварас пулсан, Болгари вăрçма пăрахма хатĕр, тесе, вăл Совет Союзĕ урлă мирлĕ сĕнӳ панă пулать.

ТАСС çапла пĕлтерме полномочи илнĕ: çакăн пек пĕлтерни—суя, ун пек япала пулман.

Ют çĕршывсенче

РУЗВЕЛЬТ ПРЕСС-КОНФЕРЕНЦИРЕ ТУХСА КАЛАНИ

ЛОНДОН, декабрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, президент Рузвельт пресс-конференцире хăй Тегерана пырсан Америка посольствинче мар, вырăс посольствинче чарăнни çинчен каланă. Мĕншĕн тесен Сталин Германия заговор туни çинчен пĕлнĕ, тенĕ.

Сталин маршал каланă тăрăх, тенĕ Рузвельт, конференци участникĕсене пурне те вĕлерме хăтланма пултараççĕ. Çавăнпа вăл мана, хула тăрăх çӳремелле ан пултăр тесе, совет посольствинче чарăнма ыйтрĕ. Черчилль совет посольствипе юнашарах вырнаçнă Британи посольствинче чарăнчĕ. Президент малалла çапла каланă: Тегеран таврашĕнче нимĕçсен 100 шпионĕ те ытла пулнă пулĕ. Нимĕçсем эпир Тегеран урамĕсем тăрăх иртсе çӳренĕ чух Сталин маршала, Черчилле тата мана вĕлерме пултарсан, вĕсене аван пулнă пулĕччĕ. Совет посольствипе Америка посольстви хушши пĕр километр çурра яхăн, тенĕ.

Президент каланă тăрăх, вăл Тегерана пыни вăрçă ĕçне ертсе пырас енĕпе те, вăрçă хыççăнхи пурнăç тĕлĕшпе те çав тери ăнăçлă пулнă. Сахалтан та пирĕн вăхăтра пурăнакан çынсен ĕмĕрĕнче вăрçă пулмалла мар тăвас тесе тăрăшни конференцире уççăн палăрса тăчĕ. Рузвельт Сталина реализмшăн мухтанă. Сталин, ман пекех, урăх вăрçă пулмалла мар тăвас тесе шухăшлать, тенĕ Рузвельт.

Рузвельт малалла хушса каланă тăрăх, Сталин унăн чи лайăх шанчăкĕсене тӳрре кăларнă, вĕсен иккĕшĕн хушшинче калама çук ырă калаçусем пулса иртнĕ. Чан Кай-ши генералпа тĕл пулнишĕн те президент кăмăллă пулнă. Тĕнĕл держависем Рузвельт Франко генералпа тĕл пулса калаçнă, тесе хыпар сарнă пулнă. Рузвельт çав хыпара сирсе янă. Анчах вăл Дакарта губернаторпа тата тинĕс ĕçĕн чиновникĕсемпе тĕл пулса калаçма чарăнни çинчен пĕлтернĕ.

РУЗВЕЛЬТ ÇĔНĔ ЗАКОНА АЛĂ ПУСНА

ВАШИНГТОН, декабрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Конгресс Китай çыннисене США-на куçма чаракан закона пăрахăçа кăлармалли законопроект йышăннă. Президент Рузвельт çав законопроекта алă пусса çирĕплетнĕ.

ФРАНЦУЗСЕН ÇĔНĔ ÇАРĔ

ЛОНДОН, декабрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). «Ньюс кроникл» ятлă хаçат пĕлтернĕ тăрăх, çитес çывăх вăхăтсенчех французсен 530 пин çынлă çарне йĕркелесе çитереççĕ. Çав çарăн пĕр корпусне экспедициллĕ корпус тесе ят панă. Ăна тăшманпа Франци территорийĕнче çапăçма тунă. Çав корпусра темиçе дивизи, вĕсене Америкăн юлашки вăхăтра туса кăларнă хĕçпăшалĕпе хĕçпăшаллантарнă.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

ГЛАВКИНОПРОКАТ ЧĂВАШ КОНТОРИ

„Жди меня“

ятлă саслă, илемлĕ çĕнĕ фильм илнĕ, ăна часах Чăваш республикинчи пур экрансем çинче те кăтартма пуçлаççĕ.

Фильм режиссерĕсем: А. СТОЛПЕРПА Б. ИВАНОВ.

Сценарий çыраканĕ: КОНСТАНТИН СИМОНОВ.

Тĕп рольсене выляканĕсем: БОРИС БЛИНОВ, ВАЛЕНТИНА СЕРОВА, ЛЕВ СВЕРДЛИН т. ыт. те.

Музыка çыраканĕ: композитор Н. КРЮКОВ.

Фильма ӳкереканĕ: оператор С. РУБАШКИН.

„Жди меня“ фильм-лирикăллă киноповесть. Ăна халăх хушшинче питех те хытă юратакан „Жди меня“ ятлă сăвă тăрăх тунă. Фильм совет çыннисен çапăçури туслăхне тата чунтан парăнса кĕрешнине кăтартса парать.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи АВТОТРАНСПОРТ УПРАВЛЕНИН АВТОТЕХСНАБНЕ çак специальноçсене пĕлекенсем васкавлă кирлĕ: старши бухгалтер, материально-технически склад заведующийĕ.

1, укçи калаçса татăлни тăрăх. Адрес çапла: гор. Чебоксары, Союзная, 4 (за Академическим театром).

2—1

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 437 Типография №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59×42 п. л. Тираж 14.420 экз.